# Йӗркесӗрлӗх чылай

**Чăваш Республикин Чӗр чун тӗнчин объекчӗсене тата вӗсем пурăнакан вырăна хӳтӗлес, тӗрӗслесе тăрас, унпа усă курассине йӗркелес енӗпе ӗҫлекен патшалăх службинче 29-ăн тăрăшаççӗ.**

25 специалистăн Раççей Федерацийӗн Административлă право йӗркине пăсни ҫинчен калакан кодексӗпе килӗшӳллӗн ӗç пуçарма ирӗк пур. Управлени умӗнчи тӗллевсене пурнăçлама коллектива 8 автомобиль, 9 юр ашуçă, 1-ер катерпа тимӗр кимӗ, 2 резина кимӗ, 5 мотор, 3 видеокамера, 7 фотоаппарат шанса панă. Çапах та ку пурлăх служба умне лартнă тӗллевсене ăнăçлă пурнăçлама май памасть.

2011 çулхи раштавăн 1-мӗшӗ тӗлне 1327 пин гектар йышăнакан сунар вырăнӗнче юридици тытăмӗсене тата предпринимательсене сунар йӗркелеме çирӗплетнӗ. Ку мӗн пур сунар территорийӗн 83 проценчӗ. Вăл 50 сунар лаптăкӗнчен тăрать. Вӗсемпе 29 юридици тытăмӗ тата предприниматель хуçаланаççӗ. Чăн та, 5-шӗ пӗлтӗр хуçалăх ӗçне чарса лартнă.

2009-2010 çулсенче сунар вырăнӗсене саккуна пăсса çирӗплетнӗрен Арбитраж сучӗсенче вӗсене туртса илессипе çыхăннă тавăççене тишкереççӗ. Сăмахран, прокуратура сунар вырăнӗсен тӗлӗшпе – 7, служба йышăнăвне пăрахăçлаттарас тӗллевпе 14 ӗç пуçарттарнă. Суд 5 сунар вырăнне арендăна пама тунă килӗшӳ саккунлă мар тесе йышăннă.

Управлени иртнӗ çул юридици сăпачӗсем тата предпринимательсем сут çанталăка сыхласси çинчен калакан саккунсене мӗнлерех пăхăннине 9 хутчен тӗрӗсленӗ. Прокуратурăпа килӗштернӗ планпа пирӗн 13 тӗрӗслев йӗркелемеллеччӗ. Ун чухлӗ иртерейменмӗр, мӗншӗн тесен 4 хуçалăх тӗрлӗ сăлтава пула хупăнчӗ. Тӗрӗслеве пӗтӗмлетнӗ хыççăн должноçри икӗ çынна административлă майпа явап тыттартăмăр – 14 пин тенкӗлӗх штрафларăмăр. Йăнăша тӳрлетме виçӗ çыру ярса асăрхаттартăмăр. Çитменлӗхе вăхăтра пӗтерчӗç. Кунсăр пуçне службӑна килнӗ пӗр çăхава вырăна çитсе тӗпчерӗмӗр – саккуна пăснă тӗслӗх тупăнмарӗ.

Раштавăн 10-мӗшӗ тӗлне чӗр чун тӗнчин объекчӗсене сунар вырăнӗсенче еплерех хӳтӗленине палăртас тӗлӗшпе 1483 рейд ирттертӗмӗр, сут çанталăка сыхласси çинчен калакан саккунсене пăхăнман 108 тӗслӗхе тăрă шыв çине кăлартăмăр. Хӗрлӗ Чутай районӗнче 6 çын сунар вăхăчӗ вӗçленсен те икӗ хир сыснине пăшалтан пенӗ, 2-ӗн «Кумашкинский» патшалăх саккасникӗнче саккуна пăснă – сунарта çӳренӗ, халӗччен те паллă мар çынсем Вăрнар районӗнче лицензисӗрех пăши тытнă. Çак тӗслӗхсем пирки пухнă материалсене полицие ярса патăмăр. Анчах унта уголовлă ӗç пуçарма йышăнман-ха.

2010 çулта пӗр уголовлă ӗçе вӗçне çитернӗ, айăплине явап тыттарнă. Административлă право йӗркине пăсни çинчен калакан кодекспа килӗшӳллӗн 105 протокол /2010 çулта – 106/ çыртăмăр. 86-шне пӗтӗмлетсе 83 çынна айăпларăмăр – штраф патăмăр, иккӗшӗнчен сунара çӳремелли ирӗке туртса илтӗмӗр. Йӗркене пăсакансен 10 пăшалне, 13 капкăнне арестлерӗмӗр, 3 пăшал туртса илме суда материалсем тăратрăмăр. Сунар объекчӗсене тăкака шыраттарса илме 7 тавăç пуçарттартăмăр. Кунсăр пуçне тата 3 çынна штраф тӳлеттернӗ. Управлени раштавăн 11-мӗшӗ тӗлне право йӗркине пăснă 111 тӗслӗхе шута илчӗ. Çулталăк вӗçлениччен татах пулчӗç. Вӗсен хисепӗ 2011 çулта виçӗм çулхи шайрах. Çапах службӑн хăшпӗр специалисчӗ сунар вырăнӗсенче саккунсене мӗнлерех пăхăннине тивӗçлипе тӗрӗслемерӗ. Çавăнпа йӗркесӗрлӗх самаях. Управлени специалисчӗсем çитменлӗхсене пӗтерессишӗн малашне лайăхрах ӗçлӗç.

**Николай КУЗЮКОВ,**
**служба ертӳçи**